Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

23 (7556) № * Юн кун, 2008 çулхи мартăн (пуш) 26-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Республикăра

## Пĕрлехи лару

Пуш уйăхĕн 22-мĕшĕнче, Правительство çурчĕн Пĕчĕк залĕнче, район-хула пуçлăхĕсен Канашĕн тата Чăваш Республикин Президенчĕ çумĕнчи приоритетлă наци проекчĕсене пурнăçлас енĕпе ĕçлекен Канашăн пĕрлехи ларăвĕ иртрĕ. Ăна Николай Федоров Президент ертсе пычĕ.

Пĕрлехи лару «АПК аталанăвĕ» наци проекчĕ мĕнле пурнăçланнине, ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ пушă выртакан çĕрсене çаврăнăша кĕртессипе республикăра мĕнле ĕçленине, «Раççей гражданĕсене – туянма май пур тата хăтлă хваттерпе тивĕçтересси», экологи хăрушсăрлăхĕ туса хурасси, йăлара пухăнакан каяшсене сиенсĕрлетесси çинчен тата ытти ыйтăва пăхса тухрĕ.



*Пирĕнтен ытларахăшĕ шăл ыратман чухне шăл тухтăрĕ пирки шухăшласах каймасть. Шăл канăçсăрлантарма тытăнсан вара пурте больницăна васкатпăр.*

*Александр Егорович Ярухин районти тĕп больницăн шăл сиплевĕн уйрăмĕнче пĕрремĕш çул мар ĕçлет. Хăйĕн ĕçне аван пĕлсе çитнĕ. Кунта пыракансемпе ялана таравать, кашнинех сиплев мелĕсемпе кăна мар, ырă тата усăллă канашпа та пулăшма тăрăшать. Çав вăхăтрах шӳтлесе калаçма та ӳркенсе тăмасть.*

*– Шăл тухтăрĕ патне кĕрсе тухасси чĕр амак тесе шутланăччĕ. Хамăн шăла сипленине сиссе те юлаймарăм,– каласа парать юлташне кабинетран тухнă пĕр хĕрарăм.– Чăннипех ăстасем ĕçлеççĕ пулас кунта.*

*Ахăртнех тивĕç çак сăмахсене кунта вăй хуракансем.*

**В. ШАПОШНИКОВ** сăн ӳкерчĕкĕ.

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

## Йывăр лава туртма ăнăçу пултăр

Ял хуçалăхĕнчи паянхи лару-тăру çăмăллисенчен мар. Çурхи уй-хир ĕçĕсем çитсе килеççĕ. Ял хуçалăх предприятийĕсене вара ытларахăшĕнче техникăна вăхăтра юсаса çитерессипе шухăшлаттарать. Çунтармалли-сĕрмелли материалсем, удобренисем, пахалăхлă вăрлăх çитмест. Кадрсем енĕпе те татса паман ыйтусем çук мар. Чапаев яч. хис., «Чемеево», К. Иванов яч. хис. хуçалăхсенче çурхи ĕçсем тытăниччен татса памалли ыйтусем уйрăмах калăпăшлă. Пĕр сăмахпа, ĕçлемелле те ĕçлемелле.

Çак ответлă тапхăрта район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи пулса Владислав Кириллович Ананьев ĕçлеме тытăнчĕ. Унччен вара вăл «ДААН» предприятире вăй хунăччĕ. Ăнăçу сунатпăр ăна йывăр лава туртма.

## Ял тăрăхĕсенче – актив пухăвĕсем

Çак кунсенче ял тăрăхĕсенче вырăнсенчи актив пухăвĕсем иртеççĕ. Унта район пуçлăхĕ, район администрацийĕн ответлă ĕçченĕсем тухса çӳреççĕ. Пухусенче ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, хуçалăхсемпе предприятисен, учрежденисен ертӳçисем хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ пирки отчетсем туса пареççĕ, хальхи лару-тăрăва хак пареççĕ, малашлăх тĕллевĕсене палăртаççĕ.

Çак вăхăта кун пек пухусем Çатракасси, Ярославка, Оринин, Турай, Шетмĕпуç ял тăрăхĕсен территорийĕсенче иртнĕ.

## Республика кунне хатĕрленсе

Çак пысăк уявчен вăхăт нумаях юлмасть. Хатĕрленӳ ĕçĕсем вара анлăн сарăлнă. Ăна халалланă анлă мероприятисенчен пĕри – информаципе реклама материалĕсен «Муркаш районĕ: ĕнер, паян, ыран» смотр-конкурсĕ. Тĕрлĕ номинацисемпе иртет вăл. Унăн тĕп тĕллевĕ – районти предприятисемпе организацисен инвестици хывăслăхне ӳстересси, экономикăпа социаллă пурнăçра пулса иртекен ырă улшăнусене çиреплетсе хăварасси, Муркаш енĕн историйĕпе йăли-йĕркисене сыхласа хăварасси тата аталантарасси.

Çак вăхăта конкурс комиссийне 50 ĕç ытла тăратнă та ĕнтĕ. Итогсене апрелĕн 1-мĕшĕнче пĕтĕмлетме палăртнă.

**В. ШАПОШНИКОВ** хатĕрленĕ.

Мĕн çинчен калаççĕ цифрăсем?

# Татса памалли ыйтусем те пур

Кăçалхи икĕ уйăх итогĕсене пĕтĕмлетни çавна кăтартса парать. Январь–февраль уйăхĕсенче районĕпе пĕтĕмĕшле 228201 пин тенкĕлĕх продукци туса хатĕрленĕ. Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, вăл 174,2 процентпа танлашать. Вăл шутран ял хуçалăх продукцине 50083,4 пин тенкĕлĕх (иртнĕ çул 42572,4 пин тенкĕлĕх) туса хатĕрленĕ.

Промышленность продукцине туса кăларасси 101,4 процент ӳснĕ, пĕтĕмпе 178117,6 пин тенкĕпе танлашнă. Муркашри кирпĕч завочĕ (иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан 270,5 процент), Муркашри издательство çурчĕ (133,9 процент), «Сундырь-Хлеб» общество (131,4 процент), Муркашри сĕт-çу завочĕ (194,6 процент), «Моргаушагропромснаб» (121,3 процент), «Моргаушкорм» общество (130,8 процент), «Сеспель» предприяти (235,5 процент), «Моргауши-Хлеб» общество (145,9 процент), «Вита» общество (125 процент), «Милград» общество (131 процент), Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсем (123 тата 129,1 процент), «Моргаушская» строительство организацийĕ (119,7 процент), «Моргаушрайгаз» филиалĕ (151,8 процент), «Моргаушавтотехсервис» уçă акционер обществи (102,1 процент) иртнĕ çулхинчен ӳсĕмлĕрех ĕçлеççĕ. Производство калăпăшне чакарнисем хушшинче Муркаш почтампчĕ (93,1 процент).

Пĕтĕмĕшле бюджет тупăшĕ 11186,3 пин тенкĕпе (179,8 процент) танлашнă. Вăл шутран ял тăрăхĕсен хайсен тупăшĕ 2199,6 пин тенкĕ (246,3 процент) пулнă.

Çулталăк пуçланнăранпа 8010,5 пин тенкĕлĕх (117,2 процент) тӳлевлĕ пулăшу панă. Вăл шутра пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ тата «Моргаушрайбыт» общество пулăшу парассине иртнĕ çулхи шайран ӳстернĕ пулсан, «Моргаушрайгаз» филиалĕ тӳлевлĕ пулăшу ĕçĕсен калăпăшне чакарнă.

Пĕтĕмĕшле тавар çаврăнăш калăпăшĕ 79040,4 пин тенкĕпе (132 процент) танлашнă. Мăн Сĕнтĕр райповĕн тавар çаврăнăш калăпăшĕ пĕлтĕрхи çав вăхăтри шайран 29,4 процент, Муркаш райповĕн 39,3 процент, ытти йышши предприятисенче 17,9 процент ӳснĕ.

Обществăлла апатлану предприятийĕсем те ăнăçлăрах ĕçлени курăнать. Мăн Сĕнтĕр райповĕн предприятийĕсем 5 миллион тенкĕлĕх (138,1 процент), Муркаш райповĕн предприятийĕсем 3532 пин тенкĕлĕх (137,9 процент) продукци реализациленĕ.

Çак тапхăрта 1027,9 тонна (иртнĕ çул çав тапхăрта 892 тонна) аш-какай туса илнĕ. Ял хуçалăх предприятийĕсемпе уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче аш-пăш туса илесси ӳснĕ пулсан, хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче ку кăтарту 46,1 процентпа кăна танлашать.

Пĕтĕмпе 6865,1 тонна (111,2 процент) сĕт сунă. Ял хуçалăх предприятийĕсенче (79,1 процент), хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче (64,7 процент) сĕт туса илесси чакнă. Çынсен хушма хуçалăхĕсенче вара 5248,9 тонна (127,2 процент) сĕт сунă.

Кашни ĕне пуçне вăтамран 639 килограмм (иртнĕ çул 530 килограмм) сĕт суса илнĕ. Çав шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче кашни ĕне пуçне вăтамран сĕт суса илесси 550 килогрампа (90,9 процент) кăна танлашнă.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.)

Райадминистрацире

## Ĕçре ӳсĕмсем тунăшăн

Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕпе халăх вĕренĕвĕн ĕçченĕсен профсоюзĕн Муркаш районĕнчи организацийĕн канашĕ, Чуманкасси ял тăрăхĕн администрацийĕ, районти шалти ĕçсен пайĕ, Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариачĕн ĕç коллективĕ, Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăх ыйтнисене тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн февралĕн 28-мĕшĕнчи 120 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парассипе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн **Елена Петровна ФЕДОТОВАНА**, Оринин шкулĕн вырăс чĕлхипе литературин учительне.

2. Вĕрентӳ ĕçĕнче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн **Светлана Васильевна ТАРАСОВАНА**, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн хуçалăх ушкăнĕн инженерне.

3. Оперативлă служба ĕçĕ-хĕлĕнче тунă çитĕнӳсемшĕн:

– **Марина Анатольевна КОНУЗИНАНА**, милици капитанне, районти шалти ĕçсен пайĕн çул çитмен çамрăксен енĕпе ĕçлекен уйрăмĕн инспекторне;

– **Михаил Александрович ПУГАЧЕВА**, милици старшинине, районти шалти ĕçсен пайĕн дежурнăй чаçĕн оперативлă дежурнăйĕн пулăшаканне.

4. Çамрăксене патриотизмла воспитани парассипе нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Вениамин Ермолаевич АНДРЕЕВА**, Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариачĕн пĕрремĕш уйрăмĕн пуçлăхĕн аслă пулăшаканне;

– **Игорь Васильевич ЕРМОЛАЕВА**, Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариачĕн иккĕмĕш уйрăмĕн пуçлăхĕн аслă пулăшаканне.

5. Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçсене хастар хутшăннăшăн:

– **Юрий Сергеевич ЗАХАРОВА**, Чапаев яч. хис. хуçалăх рабочине;

– **Иван Петрович СТОЛЯРОВА**, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхăн склад заведующине.

Пĕрлехи информаци кунĕнчен

# Ял çыннисене мĕн пăшăрхантарать

Иртнĕ юн кун республикăра Пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Çавна май пирĕн района Чăваш Республикин патшалăх ветеринари службин ертӳçи В.К. Тихонов, РФ ПФ Чăваш республикинчи уйрăмĕн – патшалăх учрежденийĕн управляющийĕ Р.А. Кондратьева, «РФ Юстици министерствин суд экспертизин Чăваш Республикинчи лабораторийĕ» патшалăх учрежденийĕн ертӳçи Л.П. Морозов, РФ социаллă страховани фончĕн пирĕн республикăри уйрăмĕн – патшалăх учрежденийĕн ертӳçин çумĕ Т.Б. Алексеева килчĕç. Чи малтанах вĕсем район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа тĕл пулчĕç. Юрий Александрович вĕсене районăн кăçалхи 2 уйăхри социаллă-экономика аталанăвĕпе паллаштарчĕ, районта чи малтан татса памалли ыйтусем çинче чарăнчĕ. Унтан хăнасем район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсемпе пĕрле ял тăрăхĕсене çитсе килчĕç, унта ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕç.

Каласа хăвармалла, тĕпрен илсен, пĕрлехи информаци кунĕнче РФ Президенчĕн суйлавĕн пĕтĕмлетĕвĕ, республикăра халăха социаллă пулăшу памалли мелсем тавра пулчĕ калаçу. Пирĕн районта Хорнуй, Чуманкасси, Ильинка ял тăрăхĕсенче пурăнакансем иртнĕ суйлава уйрăмах хастар хутшăнчĕç. Сасăлав пĕтĕмлетĕвĕсем те вĕсенче пурăнакансем хăйсем паян Раççей, республика тытса пыракан аталану çулне ырлани кăтартса параççĕ. Информаци ушкăнне кĕрекенсем, хальхинче шăпах асăннă ял тăрăхĕсенче пулса, унти халăх пурнăçĕпе, вĕсене мĕн хумхантарнипе паллашма шутларĕç.

«РФ Юстици министерствин суд экспертизин Чăваш Республикинчи лабораторийĕ» - патшалăх учрежденийĕн ертӳçи Л.П. Морозов, РФ социаллă страховани фончĕн пирĕн республикăри уйрăмĕн – патшалăх учрежденийĕн ертӳçин çумĕ Т.Б. Алексеева, Чăваш Республикин сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтĕлĕх пайĕн ертӳçи Н.П. Петрова, район администрацийĕн ĕçĕсене йĕркелесе пыраканĕ А.В. Краснов, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ А.А. Сидюшкин Хорнуй ял тăрăхĕнче пулчĕç.

– Сĕт хакĕ палăрмаллах чакса кайни çав тери пăшăрхантарать, – терĕ Ленин ячĕллĕ хуçалăх ертӳçи О.П. Яндимиркин хуçалăх ĕçĕпе паллаштарнă май.

Çак тема ял тăрăхĕн администрацийĕнче пуçтарăннă активпа, ял халăхĕпе иртнĕ тĕл пулура та тĕп вырăнта пулчĕ.

– Икĕ ĕне усратăп. Ăçта хурас халь ман вăл сĕте? Ял халăхĕнчен сĕте пач та пуçтарма пăрахрĕç. Çав хушăрах магазинти сĕт хакĕ пĕр пус та йӳнелмерĕ, – чунĕ кӳтсе çитнине пытараймасть хĕрарăм.

Чунтан кăшкăрса тухакан ял çыннисен çак ыйтăвне информаци ушкăнне кĕрекенсем республика шайне кăларса татса памаллипе палăртрĕç, ыйтăва Чăваш Республикин Президент администрацийне çитерме шантарчĕç.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.А. Любимова каланă тăрăх, Хорнуйĕнче 800 çын пурăнать. Çамрăксем те сахал мар. Ялта клуб, пуçламăш шкул, ача сачĕ пуласси пирки ĕмĕтленеççĕ, шанаççĕ паян Хорнуйсем.

– Ялта клуб сукки пирки çамрăксем йĕри-тавраri культура учрежденийĕсене каяççĕ, тĕрлĕрен кăмăллах мар лару-тăрăва лекме пултараççĕ. Ашшĕ-амăшĕсене пăшăрхантарать çакă.

Кунта тӳрех çакна каласа хăвармалла. Хорнуйсен проблеми район администрацийĕшĕн те малтан татса памалли ыйтусенчен пĕри шутланать. Асăннă социаллă объектсене тăвас ыйтупа районта ĕçлеççĕ.

Хорнуйсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ тепĕр ыйту вăл – çул тăвас ыйту. Обществăлла центр патне çити асфальт çул пуласси савăнтарать вĕсене.

– Козьмуй урамĕнче çула çуррине тунă, тепĕр çуррине тусах пĕтермеллечĕ.

– Тойкилтĕре те ферма патне çити çула юсасан тем пекехчĕ.

– Чаканар патĕнчен аннă çĕртре те тикĕслемелли вырăн пур, ачасем пылчăкра хĕн кураççĕ.

– Урам хушшинчи çулсене вак чул сарса парсан та малтанлăха самаяхчĕ, – ял çыннисен шухăшне пĕтĕмлетнĕ пек калать А.А. Сидюшкин. – Атту атăсăр çăрăлса тухма май çук.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

## Çырăнтару – 2008

## «Çĕнтерӳ ялавне» - йӳнĕ хакпа

**Апрельтен район хаçатне çырăнмалли хак палăрмалла ӳсет. Унччен ăна пĕлтĕрхи хакпа çырăнтараççĕ.**

**Çак кунсенче «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата çырăнса илме васкăр. 6 уйăха çырăнмалли хак – 169 тенкĕ те 62 пус.**

**«Чăваш пичет» киоскĕсенче те райхаçата апрельччен йӳнĕ хакпа çырăнтараççĕ.**